# ÇИЧ УРАЛЛĂ ЛАША

*чăваш халăх юмахĕ*



*Чăваш халăх поэчĕ Васлей Давыдов—Анатри каласа парать.*

Пĕр каçхине патша тĕлĕкре тĕкĕр çинче çич уrallă шурă лаша курать те тĕлĕнсе каять. Вăл вара тепĕр куннех пысăк кăна тĕкĕр тутарать, унта, чăнах та, хайхи лаша тухса тăрать. Патша çавăнтах кĕрÿшĕсене, салтакĕсене çав лашана шырама кăларса ярать.

Патша патĕнче Йăван ятлă качă тарçăра пурăннă. Вăл та çак лаша çинчен илтет те патша патне васкать.

— Тархасшăн, мана тав çав шур лашана шырама кăларса ярсамăрччĕ,— тет Йăван. Патша ăна, чăваш пулнине кура, шанмасть, хăваласа кăларса ярать. Йăван уншăн çав тери кулянать, çĕрĕпе çывăраймасăр шутласа выртать. Мĕн пулать те мĕн килет: тепĕр кунне вăл хăйĕн çутă хĕçне илет те çуранах хайхи лашана шырама тухса каять. Кайсан-кайсан, çул çинчи пĕр хăлтăр-халтăр пÿрте кĕрет. Унта ватă карчăк пурăннă-мĕн.

— Ăçта çул тытатăн?— ыйтать унран карчăк.

— Патша тĕлĕкре çич уrallă тĕлĕнмелле шур лаша курнă... Эпĕ те çавна шырама тухрăм,— тет Йăван.

— Чăнах та, ку таврара ун пек лаша пур. Анчах та ăна тупма çав тери йывăр. Ку çеç те мар, эсĕ уншăн ху пуçна çухатма та пултаран,— тет те карчăк çав шур лаша ăçта сÿрени çинчен калама пуçлать:

— Хура вăрман тăрăх икĕ çул выртать. Санăн сылтăм енчи çулĕпе каймалла. Кайсан-кайсан, пăхăр-тимĕр витнĕ пÿрт тĕл пулатăн. Унта кĕрсен, сĕтел тулли апат-çимĕç куратăн. Ăна эсĕ çисе те, тутанса та ан пăх. Мĕншĕн тесен сăрине ĕçсенех — юн тапса тухать, çăкăрне çисен — пырна ларать. Ан ман: хутаççунти апатна çеç çи. Çак пÿртрен инçе те мар — çырма. Ун урлă каçма кĕпер хывнă. Çав кĕпер урлă каçхине, вуникĕ сехет тĕлĕнче, виçĕ пуçлă çĕлен хăйĕн аслашшĕ патĕнчен хăнаран юрласа таврăнать. Эсĕ çĕлен килессе кĕпер айĕнче кĕтсе тăр. Санăн унпа çапăçма вăйу çитеймĕ. Чеерех пул. Çĕлен, сана курсан, пĕр çухрăм каялла чакать, унтан хăвăрт шуса пырса çатса яма тăрăшать. Хăраса ан ÿк, çухалса ан кай, мĕнпур вăй-хална пухса, çĕлен çăтакан пуçне аллунти хĕççÿпе касса тат. Пуçне каснă хыççăн çĕлен икĕ çухрăм каялла чакать. Кунĕнче тепĕр пуçĕпе сăхма, çатса яма тăрăшать. Эсĕ вара ăна та касса тат,— тет карчăк.— Çĕлене çĕнтернĕ хыççăн хăвăн çулупах малалла кай. Кайсан-кайсан, йĕс-тимĕр витнĕ пÿрт тĕл пулан. Унта кĕрсен, каллех сĕтел тулли ĕçме-çиме курăн. Ăна та çисе те, тутанса та ан пăх. Каçхине, вуникĕ сехет тĕлĕнче, виçĕ лаша кÿлнĕ ултă пуçлă çĕлен хăйĕн аслашшĕ патĕнчен хăнаран юрласа килет. Эсĕ çав вăхăтра умри çырма урлă хывнă кĕпер айĕнчен хăвăрт кăна сиксе тух та унăн икĕ пуçне касса тат. Çапăçу йывăр пулать. Çĕлен хăйĕн икĕ пуçне касса татнă хыççăн икĕ çухрăм каялла чакать. Вăл хăвăрт шуса пырса çатса яма шутлать. Эсĕ вара хăраса ан ÿк, çухалса ан кай, пĕтĕм вăй-хална пухса, çак çĕленĕн икĕ пуçне те харăс касса тат. Ан ман: çĕлен каллех ултă çухрăм каялла чакать. Унтан, пĕтĕм вăйне пухса, хаярланса сан патна чашкăрса пырать. Эсĕ ан парăн, юлашки вăйна пухса, çĕленĕн тата икĕ пуçне касса тат. Унтан ху çулупах малалла васка. Кайсан-кайсан, аякранах ылтăнпа витнĕ, йăлтăртатса ларакан пÿрт куратăн. Çавăнта чи хăрушă ватă çĕлен пурăнать. Унăн пÿртĕнче те ĕçме-çиме — пурте пур. Çак тискер çĕлен каçхине, вуникĕ сехет тĕлĕнче, асламăшĕ патĕнчен хăнаран юрласа таврăнать. Эсĕ вара, вăл кĕпер çине кĕрсенех, лаша кĕçеннине илтетĕн. Çав вăхăтра санăн кĕпер айĕнчен сиксе тухмалла та çĕленĕн виçĕ пуçне касса татмалла. Çĕлен çав тери çилленет. Вăл ултă

çухрăм каялла чакать те çăварĕнчен тухакан вут-хĕмĕпе сан патналла чашкăрса пырать, хÿрипе çапса, кăкăр таран çĕр айне кĕртсе лартать. Анчах питех хăраса ан ÿк, çухалса ан кай. Çав хăрушă вăхăтра сана хайхи çич уралла шурă лаша пулăшать, çĕр айĕнчен туртса кăларать. Çĕр айĕнчен тухнă-тухманах çĕленĕн виçĕ пуçне касса тат. Кунпа та çĕлен пĕтмест. Вăл, юлашки вăйне пухса, тăхăр çухрăм каялла чакать, унтан каллех сан çине ыткăнать. Эсĕ çав вăхăтра кĕпер айне вăр-вар кĕрсе лар, çĕлен кĕпер çине пырса кĕрсенех сиксе тух, халтан кайнă çĕленĕн юлашки виçĕ пуçне касса тат. Вара ун хыççăн тинех çич уралла шурă лаша сан аллунта пулать. Унпа лăпланса ан лар, малашне те йывăр çулсем пулаççĕ. Патша килне каялла таврăннă чухне вăрманта куçа илĕртсе ларакан пиççе çитнĕ çĕр çырли тĕл пулатăн. Пĕрне те татса ан çи. Мĕншĕн тесен çĕленсен аслашшĕ çав çырлана сана çитерме ÿстерет, вĕлерме тăрăшать. Асăрханулла пул!— тет карчăк.

Йăван, карчăка чун-чĕререн тав туса, тухса каять. Çул çинче йăлтах хайхи карчăк каланă пек пулса пырать. Ултав хыççăн ултав, çапăçу хыççăн çапăçу... Йăван яланах карчăк каланине асра тытать, çул çинче тĕл пулнă чи хаяр та усал тăшмансене — çĕленсене — çĕнтерсе пырать, çичĕ уралла лашана хăй аллине ярса илет. Йăван, савăнăçне ниçта хураймасăр, çак урхамахпа патша патне васкать. Кун хыççăн кун, çĕр хыççăн çĕр иртет. Йăван хутаççинче апат-çимĕç пĕтсе çитет. Унăн çав тери çиесси килет. Мĕн тумалла?! Пăхать: йĕри-тавра куç умĕнче пиççе çитнĕ хĕп-хĕрлĕ çырла. Йăван карчăк каланине аса илет. Пĕр çырлине те çимест. Чăтать. Каçхине аслă вăрманти пĕр уçланкăра ним туйми çывăрать, тепĕр кунне ирех çула тухать. Кайсан-кайсан, унăн шыв ĕçесси килет. Инçе те мар çăлран шыв юхни курăнса каять. Ăна каллех карчăк вĕрентсе каланисем аса килеççĕ:

— Сук, чăтас пулать, хама хам ултавпа вĕлерме юрамасть,— тет Йăван.

Вăл тарăхнипе юхса выртакан çăл шывне аллинчи патакпа çапса пăхать. Тĕлĕнмелле: çăл шывĕнчен çавăнтах хĕрлĕ юн сирпĕнсе тухать. Йăван çаплах патша патне васкать. Вăрман варринче, уçланкăра, çĕр каçма тивет. Ирхине, çывăрса тăнă-тăманах, вăл таçтан-инçетрен вуникĕ пуçлă çĕлен чашкăрса килнине туйса илет. Йăванăн çич уралла шурă лаши те çакна сисет, çавăнтах малалла тапса сикет. Кайсан-кайсан, пĕр тимĕрçĕ лаççи тĕлне пырса тухаççĕ. Ак, тамаша: вуникĕ пуçлă çĕлен вĕсенчен юлмасть иккен, çул тăрăх чашкăра-чашкăра пырать. Йăван çухалса каймасть: лашине çавăтса, тимĕрçĕ лаççине кĕрсе ларать, ăна шал енчен питĕрсе хурать. Çĕлен, вут-хĕлхем сирпĕтсе, тимĕрçĕ лаççи тĕлне çитет. Çав тери тарăхнине пула чĕлхипе лаç алăкне шăтарать те унта кĕме пуçлать. Йăван унăн мĕнпур пуçне каса-каса пăрахать те лашипе инçе çула тухать. Кайсан-кайсан, Йăвана патша салтакĕ тĕл пулать. Вăл паттăртан çич уралла лашана хăйне пама тархасласа ыйтать. Йăван килĕшмест. Салтак урса каять, Йăвана хăратма пуçлать. Йăван, ырă мара сиссе, салтакран çапла ыйтать: «Хăвăн аллунти ылтăн çĕррÿне хывса пар, ун чух, тен, эпĕ те лашана пама килĕшĕп».

— Парăттăм, анчах çĕррĕм тем тусан та пÿрнерен тухасшăн мар,— тет салтак.

— Мĕн тăвăн ĕнтĕ. Эпĕ те сана хам лашана параймастăп,— тет Йăван.

— Апла пулсан эпĕ çĕрре пÿрнепе пĕрлех касса паратăп,— тет патшаран ырă ят илтес тесе çунса тăракан салтак. Вăл ылтăн çĕррине пÿрни-мĕнĕпех касса парать те Йăван аллинчен çич уралла лашана илсе каять.

...Салтак патша патне çичĕ уралла шурă лашапа çĕмĕрттерсе пырса кĕрет. Халăх тĕлĕнсе каять. Патша çав тери савăнать. Вăл çавăнтах хăйĕн кĕçĕн чипер хĕрне çав салтака качча пама килĕшет. Çак хыпар Йăван хăлхине пырса кĕрет. Вăл та патшан хăй чун-чĕререн юратнă кĕçĕн хĕрĕшĕн çунать. Мĕн тумалла? Туй пуçланать. Сăва-юрă, ташă-кулă янăраса тăрать. Туй кĕрекинче патша савăнса, мухтанса ларать. Вăл салтака, хĕрĕпе пĕрле, пысăк мул пама пулать...

Йăван чăтса тăраймасть, камитле тăхăнса туя пырса кĕрет. Шăпах çак вăхăтра патша салтакĕ хăй çич уралла шурă лашана мĕнле тупни çинчен мухтанса каласа парать.

Йăван хăвăрт кăна туй çыннисем хушшине кĕрсе тăрать те: «Патша-аттемĕр, туй çыннисем, пурте мана итлĕр! Салтак сире суять! Çичĕ уралла лашана вăл мар, эпĕ тупрăм! Салтак ăна манран хăратса илме тăрăшрĕ. Ăна çапла каларăм: «Эсĕ аллунти çĕррÿне парсан çеç лаша санăн пулĕ терĕм. Вăл çавăнтах, пĕр шутласа тăмасăрах, хăйĕн ылтăн çĕррине мана пачĕ. Акă унăн пÿрнипе çĕрри!»— тет.

Патша тĕлĕнсе каять. Салтака аллине кăтартма хушать; килнĕ çын калани тĕрĕссе тухать. Туй халăхĕ, Йăвана мухтаса, кĕр-кĕрлет. Ним тума та çук — патша хăйĕн кĕçĕн хĕрне Йăвана качча парать.

Туй кĕрекинчи мухтанчăк салтак хирĕç те калаймасть. Вăл, намăсланса, туйран тухса шăвăнать.

Çав туйра эпĕ те пултăм, купăс кала-кала, туй çыннисене савăнтартăм.